**Сăмах – специалиста**

# Выльăх апачĕ хатĕрлеме вăхăт çитрĕ

Урамра çуллахи илемлĕ вăхăт хуçаланать. Анчах çуркуннеччĕ, паян вара уйхирсемпе улăх-çарансем хулăн симĕс кавирпе витĕнчĕç. Кăвак тӳпере те, çывăхри ĕшнере те кайăксен оркестрĕ çут çанталăк илемĕпе тата пуянлăхĕпе киленсе кĕвĕ шăрантарать...



Пĕрлешӳллĕ хуçалăхсен уй-хирĕсенче нумай çул ӳсекен курăксем хăпарса çитнĕ май çĕр ĕçченĕ умне паха утă, силоспа сенаж хатĕрлемелли тапхăр тухса тăчĕ. Черетлĕ ĕç çи пуçлансах кайиччен кунта хăш-пĕр асăрхаттарусемпе паллаштарни иртнĕ çул тунă йăнăшсенчен пăрăнса иртме пулăшасса шанатăп. Паян курăнать ĕнтĕ, пĕлтĕр пахалăхсăр апат хатĕрленĕ хуçалăхсем хĕллехи тапхăрта выльăх-чĕрлĕх продукцине çителĕклĕ туса илеймерĕç, выльăх отраслĕ çур акине хатĕрленме финанс тĕлĕшĕнчен пулăшакан тĕп çăл куç пулнипе туллин усă кураймарĕç.

Çу кунĕсенче симĕс курăкран хатĕрленĕ силос-сенаж хĕллехи тапхăрта мăйракаллă шултра выльăха çитермелли паха сĕтеклĕ апат. Малашлăха пăхакан чылай хуçалăхсем унпа анлăн усă кураççĕ. Ку лайăх, анчах кунта та технологи малти вырăнта тăрать. Çапла вара сенаж-силос хатĕрленĕ чухнехи технологие пăссан выльăх апачĕн пахалăхĕ палăрмаллах чакать. Çавăнпа та пахалăхлă апат хатĕрлес пулсан, силослăх курăка вăхăтра çулса пуçтарса илесси пысăк пĕлтерĕшлĕ. Викăпа сĕлĕне тата пăрçа хутăшне чечек çурнă вăхăтра, аялти пăрçа хутаççисем тулнă тапхăрта çулса илмелле пулсан, пучахлă культурăсене пучах тухнă самантра çулса илме тăрăшмалла. Нумай çул ӳсекен курăксен анисене курăксем чечек çуриччен косилкăсем кăлармалла. Çак вăхăтра кăна ӳсен-тăран тĕрлĕ йышши тутлăхлă япаласемпе пуян. Силоспа сенаж тата утă янтăланă чух курăка çулса-вĕтетсе траншейăна хывиччен тата рулона е капана хуриччен тапхăрта механизациленĕ комплекслă бригадăсемпе ĕçлени вырăнлă. Тулли хăватпа ĕçлес тесен хуçалăхсен çак енпе хатĕрленмелле те ĕнтĕ ĕç çине. Механизмсем çителĕклĕ-юсавлă пулни те, ĕç расписанине тĕрĕс йĕркелени те пĕлтерĕшлĕ çак тапхăрта.

Паха сенаж хатĕрлес тетĕр пулсан, курăксене çулса кушăхтармалла. Вĕсен нӳрĕклĕхĕ 50 – 55 процентран ытла пулмалла мар. Кушăхтарнă курăка 3 сантиметр чухлĕ вĕтетмелле. Силос хатĕрлес пулсан, апат пахалăхĕ çине курăка вĕтетни уйрăмах пысăк витĕм кӳрет. Кунта курăк нӳрĕклĕхĕ 65 процент пулсан ăна – 2-3 сантиметр, 70-75 процент пулсан – 4-5 сантиметр, 80 процент пулсан 8-10 сантиметр вĕтетмелле. Хиртен илсе килнĕ симĕс массăна траншейăсенче таптаса пусăрăнтарма гусеницăллă бульдозерсемпе ĕçлени вырăнлă.

Траншейăсене выльăх апачĕ хума пуçличчен вĕсене иртнĕ çулхи апат юлашкисенчен хырса тасатмалла, траншейăсем патне пымалли çулсене тикĕслесе хытармалла.

*<u>Траншейăна сенаж-силос хурасси</u>*. Ĕç пуçланиччен траншея тĕпне 40 – 50 сантиметр хулăнăш улăм хумалла. Ун çине симĕс масса хума пуçласан, кашни кун таптаса пусăрăнтарнă симĕс масса сийĕ 80 сантиметртан кая пулмалла мар. Траншея çӳллĕшĕ 2,5 метр пулсан, симĕс массăпа тулнă траншейăна 3 кун хушшинче хупмалла. Траншея çӳллĕшĕ 3,5 – 4 метр пулсан, вăл симĕс массăпа тулсан, ирĕкре 5 кунран ытла выртмалла мар. Сывлăш кĕресрен массăна кашни кун таптамалла, уйрăмах стенасем çумĕпе. Траншейăна хиртен симĕс масса килмелли смена вĕçленсен те ăна 2-3 сехет хушши таптаса пусăрăнтарни пахалăх çине пысăк витĕм кӳрет. Лайăх пусăрăнтарман массăна сывлăш кĕрет те унта çуллă кислота шайĕ ӳссе каять. Вăл вара выльăхшăн питĕ сиенлĕ.

Силос-сенаж хатĕрленĕ чух унăн температури 35-37 градусран иртсе каймалла мар. Ахальлĕн унăн пахалăхĕ палăрмаллах чакать.

Нӳрĕклĕх пирки те асрах тытмалла. Симĕс масса нӳрĕклĕхĕ 75 процентран ытла пулсан, унтан сĕткен юхма пуçлать, унпа пĕрле тутлăхлă япаласем те юхса тухаççĕ, силос йӳçĕхет, унран лайăх мар шăршă кĕме пуçлать. Çавăнпа та халĕ çулнă курăка кушăхтарни вырăнлă. Çакна та манмалла мар, пĕр тонна симĕс масса çине 8-10 килограмм тăвар сапмалла.

Лайăх пусăрăнтарнă силос-сенажа çиелтен полиэтилен пленкăпа витмелле. Унăн сарлакăшĕ 8-9 метртан кая пулмалла мар. Хĕррисене вара çыпăçтармалла (çине-çине хурас çук). Пленкăсене шăши шăтарасран ун çине известь тусанне те сапма юрать. Хыççăн 5-8 сантиметр хулăнăш тăпрапа е 20-25 сантиметр хулăнăш торфпа витмелле. Пленка çук пулсан ун вырăнне картон е толь сарса çиелтен 15-20 сантиметр хулăнăш хĕрлĕ тăм витмелле. Хĕллехи тапхăрта çиелти силос ан шăнтăр тесе çиелтен тата 50-60 сантиметр хулăнăш улăм тюксем хумалла.

Вăрттăнлăх мар, силос хатĕрленĕ чух тĕрлĕ кĕвелĕкпе (закваска) усă курни вырăнлă. Вăл биобактерисемпе пуянни кашни специалистшăнах паллă. Тĕрлĕрен препаратсемпе усă курни силосри тутлăхлă япаласене 25-30 процент таран упраса хăварма май парать. Кун пек чух выльăх апачĕн йӳçеклĕхĕ чакать, хими составĕ лайăхланать: сахăр хисепĕ 5-13 процент хăпарать, сахăрпа протеин шайлашăвĕ пысăкланать. Закваскăпа усă курнă чух тăвар пачах та сапмалла мар. Пĕр литр закваскăна 12-35 градуслă 100 – 200 литр шывпа хутăштармалла, 4 сехет лартнă хыççăн усă курмалла, пĕр литр хатĕр шĕвеке 50 тонна симĕс масса çине лейкăпа пĕрĕхмелле. Симĕс курăкăн нӳрĕклĕхĕ пысăк пулсан, закваскăна 100 литр шывра çеç ирĕлтермелле. Силос хатĕрленĕ чух хутăш улăм та яма юрать. Çавна валли малтанах траншея тĕпне 80 – 100 сантиметр улăм сармалла, кайран тракторпа пусăрăнтарнă май кашни 30-35 сантиметр хулăнăш симĕс масса çине улăм хумалла. Силос 1,5 метр хулăнăшне çитсен улăм виçине пĕчĕклетмелле те çиелти пĕр метр сие пачах хумалла мар. Улăма сывлăш кĕресрен траншея стенисенчен 50-60 сантиметр шаларах хумалла.

Технологие пăхăнса хатĕрленĕ сенажпа силос лайăх упранаççĕ, 30-45 кунран çиме хатĕр пулаççĕ. Анчах ăна выльăхсене париччен Муркашри ветлабораторире (9 кăтартупа) е Çĕрпӳри лабораторире (13 кăтартупа) тĕрĕслеттермелле.

Паха апат кăна выльăхсен продуктивлăхне хĕл кунĕсенче те тивĕçлĕ шайра тытма пулăшĕ. Ку вара хуçалăх аталанăвĕн черетлĕ утăмĕ, çĕнĕлĕхсене çул памалли ен.

**Т. АЛЕКСЕЕВА,**
**район администрацийĕн ял хуçалăх пайĕн тĕп зоотехник ĕçĕсене туса пыраканĕ.**

**Килти хушма хуçалăх**

# Пысăк тухăç вăрттăнлăхĕ

Çĕр улми тутлăхлă çеç мар, çителĕклĕ сывлăш кĕрекен кăпăшка çĕре юрататать. Специалистсем çирĕплетнĕ тăрăх, çĕр улмишĕн çĕр сывлама пултарни нӳрĕк пуррипе танах. Çавăнпа та “иккĕмĕш çăкăр” çеçкисем 10-12 сантиметра çитсен вĕсене объязательнăй йĕркепе купаламалла. Çак ансат тата пурте пурнăçлама пултаракан ĕç çĕр улми тухăçне 25 – 30 процент таран ӳстерет. Манас çук, вăрăма кайнă шăрăх та типĕ çанталăкра çĕр улми кассисене тарăн кăпкалатни, ретсене купалани вырăнлă ĕç мар, мĕншĕн тесен ахаль те сахал нӳрĕк туххăмрах пăсланса пĕтет. Кун пек чух ретсем хушшинчи ăшăх кăпкалатусем (5-6 сантиметр) вырăнлă. Çав вăхăтрах çумăр çуса иртсен е шăварса пĕтерсен объязательнăй йĕркепе касăсем хушшине кăпкалатса тăпрана ретсем çумне купаламалла. Çакă хушма çимĕçсем тытăнма пулăшать. Çĕр улмие алăпа шăварнă чух пĕр лейка шыв çĕр улмин 2-3 тĕммине çитет. Ретсем хушшине чĕрессине 20 кун иртсен тепре пурнăçламалла.

# Груша мĕншĕн çĕр улми тутиллĕ пулать?

Çакăн вăрттăнлăхĕ опытлă пахчаçăсемшĕн паллă ĕнтĕ, анчах тинтерех пахча ĕçне кӳлĕнекенсемшĕн кунта вĕренмелли чылай.

Ыйту хуравĕ çакăнта: нумай пахчаçăсем груша çимĕçне йывăç çинчех пиçтерсе çитересшĕн. Çакна вара тума юрамасть. Грушăн лайăх тути ăна вăхăтра татсан – çурма пиçсе çитсен – кăна нормăна кĕрсе çитет.

Йывăç çинче пиçсе çитнĕ грушăсен тути крахмал майлă пулса каять. Пиçсе иртсе кайни çинчен грушăсем саралса кайни калать. Грушăсене хăçан татмалли пирки тĕп тĕрĕс калама çук. Вăл çут çанталăк условийĕсене пула улшăнать. Йывăçăн кăнтăр енче вырнаçнă çимĕçĕсен малтанхи партийĕ саралма пуçласанах пĕтĕм тухăçа татса пуçтарса кĕртмелле. Çакăн пек тунă çимĕçсен малтанах темиçе кун сулхăн пӳлĕмре пиçсе çитмелле. Кун пек çимĕçсем вăхăт иртсен сĕткенлĕ пулса çитеççĕ.

# Хăярсене шăварасси

Хăярсене лартсан малтанхи вăхăтра вĕсене сахалтарах шăвармалла. Ахальлĕн ытлашши нӳрĕк, çитменнине шывĕ сивĕрех пулсан, хăяра пысăк сиен кӳрет: калчасем ӳссе аталанмасăрах вилсе пĕтеççĕ.

Вунă кунра пĕрре хăяра тислĕкпе хутăштарнă шывпа шăвармалла.

# Фасоль

Ку культурăна хăярпа пĕр вăхăтрах акаççĕ. Хура тăпраллă мар зонăри час улшăнакан çуллахи çанталăк условийĕсенче тĕмĕллĕ фасоле ытларах ӳстереççĕ.

Çакна валли пахчаçăсем хĕвел ытларах ӳкекен, çилсенчен хӳтĕленнĕ, тухăçлă çĕр лаптăкĕсене суйласа илеççĕ. Фасоль акас умĕн ăна валли уйăрнă йăрана çĕрнĕ тислĕк хурса пусаççĕ. Тĕмĕллĕ фасоле йăран çинче виçĕ ретпе е шахмат йĕркипе ӳстереççĕ. Акнă чух йăран çинчи кашни шăтăка маларах ислетнĕ икĕ вăрăна 2-5 сантиметр тарăнăшне хумалла. Тĕмĕсем хушши 20-30 сантиметр, ретсем хушши 30-45 сантиметр кирлĕ. Вăрлăха лайăх тымарланма авăнчăк енĕпе аялалла туса хумалла. Фасоле пăхса тăрасси йăрансене тăтăш çумланинче, шăрăх çанталăкра шăварсах тăнинче тата ретсем хушшине кăпкалатсах тăнинче.

Фасоль тухăçне вăл чечеке ларсан 2-3 эрнерен пуçтарма пуçлама юрать. Çимĕçсене ирпе е каçпа ватăлса е хытса каясран суйласа касса пуçтармалла.

**“Домашняя газета” хаçатран.**

**Пахчаçăсене пĕлме**

# Уйăх календарĕ

***Июнь уйăхĕнче пахча çимĕç культурисене акма, лартма юрăхлă кунсем***

| | |
|---|---|
| Тутлă пăрăç | 25-26 |
| Пăрăç | 25-30 |
| Томат | 1-4, 25-30 |
| Купăста | 23-26 |
| Редис | 1-4, 7-13 |
| Йӳç кăшман | 2-4, 9-12, 30 |
| Кăшман, çарăк, тутлă кăшман | 2-4, 11-13, 30 |
| Хăяр | 25-26 |
| Баклажан, кабачок, патиссон | 23-26 |
| Кишĕр | 3-4, 12-13 |
| Салат, шпинат | 23-27 |
| Сельдерей | 3-4, 7-8, 12-13, 23-26, 30 |
| Хĕрлĕ кăшман | 3-4, 7-8, 12-13, 30 |
| Петрушка (çулçăлли) | 20-24 |
| Петрушка (тымарли) | 3-4, 7-8, 12-13 |
| Укроп, фенхель | 20-26 |
| Хрен | 25-26 |
| Симĕс сухан | 1-4, 25-30 |
| Пуçлă сухан | 1-4, 10-13 |
| Хăвăл сухан | 1, 19-20 |
| Арбуз, мăн хăяр, дыня | 23-26 |
| Ыхра | 1-2, 10-11 |
| Çĕр улми | 1-4, 30 |
| Кукуруза | 1-2, 25-30 |
| Пăрçа, фасоль | 23-26, 30 |
| Çĕр çырли, ревень | 9-10, 20-24 |
| Майоран, базилик, розмарин | 25-26, 30 |
| Хĕвелçаврăнăш | 17-19, 23-27 |
| Хăмла | 19-20, 28-29 |
| Чечексем | |
| Суханĕ | 4, 9-10 |
| Вăррисем | 19-20, 23-27 |

**Шурча вăрçи пулнăранпа – 165 çул**

# Хирĕçтăру вăрçăпа вĕçленнĕ

**Майăн 18-мĕшĕнче Шурча вăрçи пулнăранпа 165 çул çитнине халаллаа наукăпа практика конференцийĕ иртнĕ. Малтанах пухăннисем Шурча шкулĕнчи историпе краеведени музейĕпе паллашнă, историллĕ вырăнсенче пулса курнă. Ярапайкассинчи Культура çурчĕ çумĕнчи «Екрем» халăх фольклор ансамблĕ хăйĕн пултарулăхĕпе савăнтарнă.**

**Наукăпа практика конференцийĕ Шурчари Культура çуртĕнче иртнĕ. Шурча вăрçин историллĕ пĕлтерĕшĕпе вырăнĕ пирки чăваш халăх академикĕ, тăван тавралăх культурине вĕрентекен учительсен районти методика пĕрлешĕвĕн ертӳçи Е.Е. Ерагин, чăваш халăх академикĕ, истори наукисен докторĕ, И.Я. Яковлев ячĕллĕ Чăваш патшалăх педагогика университечĕн Раççей историйĕн кафедрин заведующийĕ Л.А. Ефимов, чăваш халăх академикĕ, Чăваш Республикинчи таврапĕлӳçĕсен союзĕн председателĕ В.П. Станьял докладсем туса панă.**

Шурча вăрçи пысăк пĕлтерĕшлĕ событи пулса тăрать. Унта 1842 çулта Хусан кĕпĕрнине кĕрекен чăвашсемпе çармăссем хутшăннă. 1839 çулта Хусан кĕпĕрнине кĕрекен патшалăх хресченĕсем хушшинче обществăлла суха лаптăкĕсем уйăрма тытăннă. 1840 çулта правительство вăйпах пур çĕрте те çĕр улми ларттарма пуçăннă. Чăвашсемпе çармăссем тата Козьмодемьянскра, Çĕрпӳре, Шупашкарта, Етĕрнере пурăнакан патшалăх хресченĕсем хушшинче обществăлла суха лаптăкĕсем уйăрнă май вĕсене удельнăй хресченсем шутне куçарасси пирки сăмах сарăлать. Ноябрь уйăхĕнче хирĕç тăру çивĕчленнĕ. Чăвашсем общество ячĕпе Хусана çӳревçĕсем яма тытăнаççĕ. Вĕсене обществăлла суха лаптăкĕсем уйăрма тытăнни тивĕçтермест. Йĕркеллĕ мар лару-тăрулла вырăнсене Хусанти патшалăх пурлăх палатин тата округри управленин чиновникĕсемпе казаксене ăнлантару ĕçне туса ирттерме янă. Анчах та нумай ялсенче пурăнакансем обществăлла çĕр лаптăкĕсем уйăрма килĕшмен. 1842 çулхи апрель уйăхĕн çурри тĕлне 200 ытла ялта пăлхавсем пуçланнă.

Майăн 19-мĕшĕнче Шурчара Козьмодемьянскран 5 пин, Етĕрнерен 2 пин çын пухăннă. Вĕсем сенĕксемпе, пуртăсемпе, çавасемпе, чукмарсемпе, вăрăм авăрлă сăнăсемпе «хĕç-пăшалланнă». Вĕсене 1812 çулхи Отечественнăй вăрçă участникĕ Юваново (Урпаш) ялĕнчи Василий Григорьев ертсе пынă. Яла Поль полковник ертсе пыракан 250 салтаклă отряд килсе çитнĕ. Хресченсем хăйсем кăмăллă пулманнине палăртнă, салтаксем çине тапăннă. Ун чухне 464 хресчене арестленĕ. Майăн 19-мĕшĕнче каçхине Шурчана çар губернаторĕ çитнĕ. Унпа пĕрле 478 салтак пулнă. Майăн 20-мĕшĕнче арестленисене хĕнесе пĕтернĕ. Ку вăхăтра Шурчасене пулăшма Оринин енчен 10 пине яхăн пăлхавçă çитнĕ. Моргаушка юхан шывĕ хĕрринче çапăçу пулса иртнĕ. Салтаксем залппа 30 хут пенĕ. 8 çын вилнĕ, 300-е яхăн аманнă. Йывăр аманнисем кайран 28 çын вилнĕ.

Майăн 23-мĕшĕнче Шурчана шалти сыхлавăн 4-мĕш округ командирĕ Мандрык генерал-майор салтаксен ротипе килсе çитнĕ. Хресченсен пăлхавне пуçĕпех путарма пур вулăссене те салтаксем янă.

Виçĕ çар суд комиссийĕ 1 пин ытла çынна айăпланă. Вĕсем хушшинче чăвашсемпе пĕрлех çармăссем те, Козьмодемьянскра, Етĕрнере, Шупашкарта тата Çĕрпӳре пурăнакансем. 382 çынна крепостной ĕçсене тата салтака панă, 34 çынна Çĕпĕре каторгăна янă, çĕршерĕшне хĕнесе «тăн панă».

Историе çĕнĕрен çырма та, унăн страницисене кăларса пăрахма та çук. Шурча вăрçи те истори страницинче яланлăхах çырăнса юлнă.

**Е. ЕРАГИН.**